# ЧУПСА-ЮРТСА ҪИЛЕТ ТУР ҪĂРХА




1. Хура сăрлă ҫатан та урапа
Шăлтăртатать туртса пынă чух.
Чупса-юртса килет тур ҫăрха.

*Хушса юрламалли:*

Чупса-юртса килет те тур ҫăрха,
Кĕмĕл пĕкки килет ҫуталса, } *2 хут*
Чĕн тилхепи пырать туртăнса.

2. Атте-анне ҫурчĕ, ай, аслă ҫурт,—
Чун хурланать тухса кайнă чух.
Чупса-юртса килет тур ҫăрха.

*Хушса юрламалли.*

3. Вуник чĕкеҫ пĕрле — ай, пĕр кашта,
Юрласа юррисем пĕтес ҫук.
Чупса-юртса килет тур ҫăрха.

*Хушса юрламалли.*

4. Ҫак тăвансем пурте пĕрле чухне
Калаҫса сăмахсем пĕтес ҫук,
Чупса-юртса килет тур ҫăрха.

*Хушса юрламалли.*